ЛК3 К84.09(=Чув)
С30
Ч-43226

Юрий Семенов



# Çӗр çаврӑнать

Национальная библиотека ЧР
4-043226

ПРОВЕРЕНО
20 05 МАР 2015

К84.09(Чу) С 14

Юрий Семенов



# Ҫӗр ҫавӑранать

*сӑвӑсем*

*Чӑваш кӗнеке издательстви*
*Шупашкар—1974*

ДАРСТВЕ[illegible] ЭКЗ.

С(Чув)2
С30

Ходорченко В.А.

«Ҫĕр ҫавранать» — Юрий Семенов сăвăҫăн иккĕмĕш кĕнеки. Ҫамрăксен мал ĕмĕтлĕ пурнăҫĕ, Тăван ҫĕршыв чиккинче тăракансен ĕҫĕ-хĕлĕпе вĕренĕвĕ, ударлă стройкăсенчи комсомолецсен хастарлăхĕ ҫинчен юратса та хавхаланса ҫырать автор хăйĕн ҫĕнĕ кĕнекинче. Кунтах хамăр таврапăхăн ытарайми илемне сăнлакан ӳкерчĕксем те, асран кайми ачалăх ҫинчен ҫырнă сăвăсем те сахал мар.

Хисеплĕ
Александр Егоровича

Эсир
ӳсене 8ул = йĕрне
Ӳпкелĕ манăн
тапатмасар.

7—4—3
62—74 М

© Чувашское книжное издательство, 1974 г.

и-43226

Юрий Сем
3.X-79 г.



# ÇЫВĂХ
# САНСЕМ

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

Çумăр килчĕ, çумăр çурĕ, чарăнчĕ,
Атăл урлă кĕмĕл пĕкĕ карăнчĕ.
Ун пĕр вĕçĕ Çĕнĕ Шупашкар çинче,
Тепĕр вĕçĕ марисен çыранĕнче.
Сар хĕвел çĕре хĕрӳ шевле сапать,
Асамат кĕперĕ тăрăх хĕм чупать.
Пĕрлештерчĕ пĕкĕ икĕ улăха—
Ыталарĕ пĕкĕ икĕ халăха.

1971

## ТЕАТРТА

Ай-хай, епле маттур выляççĕ
Чăваш артисчĕсем паян:
Çурхи вăй картине сăнлаççĕ,
Кĕвви-çемми каять ян-ян...

Хăш самантра — асăрхаймарăм,
Тĕтрелĕх анчĕ куç çине.
Сисмесĕрех эп кĕтĕм кайрăм
Хитре ачалăх тĕнчине.

...Атте-анне выртма хушаççĕ,
Çитет, тесе, яла касса.
Пире вырттарăн-и? Чупаççĕ
Ман тантăшсем вăтакаса.

Уничере — ем-ешӗл курӑк,
Ҫӗмӗртлӗхсем — туй тумӗпе.
Ҫӗрулмипе ҫиен те турӑх
Вӗҫен каллех тусусемпе.

Пӗве ҫумне вӑйӑа тухаҫҫӗ
Япшар хӗрсем те каччӑсем.
Вӗсем карталанса юрлаҫҫӗ,
Ута-ута ҫаврӑннӑҫем.

Хӑш сасӑсем янраҫҫӗ хулӑн,
Теприйӗсем — хивре, ҫинҫе.
Пӗрлешӗнсе юхаҫҫӗ хумлӑн
Ҫавра Ҫавал кукӑрӗнче.

Унтан кӗҫех ташша яраҫҫӗ,
Саккӑрлатса, ҫӗр тӗпретсе.
Такмаксемпе те ҫунтараҫҫӗ,
Илеҫҫӗ меллӗн йӗплесе.

Ӑҫтан ҫитет мехелӗ-халӗ
Сикме, шума та ҫаврӑнма?
Эй, ҫамрӑклӑх! Эс — чун сунталӗ,
Яту сан — ӗмӗр асӑнма.

Юрӑпалах пулаймӑн юрлӑ,
Тулаймӗ кӑмӑл ташӑпах.
Сӗнет те вӑйӑпуҫ правурӑн —
Тем самантра ярать шӑпа.

Вара — тараҫҫӗ, хӑвалаҫҫӗ,
Вара — тытаҫҫӗ пӗр-пӗрне.
Вара калать вӑтанчӑк каччӑ
Ачаш сӑмах та хӑй хӗрне.

...Эй, ялăм! Вăрçă чух çаралтăн,
Пĕр пĕчĕк клуб та çукчĕ сан,
Çапах чуна çырлахтараттăн
Каç-каç хуткупăс янрасан.

Эй, халăхăм! Вут витĕр тухрăн
Çирĕпленсе те шăранса.
Çап-çутă керменсем те турăн,
Ак халь ларатпăр савăнса.

Сан ытамна пырса кĕретпĕр
Кунта кашни килмессерен,
Çав кунсене аса илетпĕр...
...Шел, халăх ал çупать иккен.

1972

## АНТЕННĂСЕМ

Хула пек капăр ялăмра
Вĕсем килĕренех ларaççĕ,
Пин сас-хураллă эфира
Асамçăсем пек хыпалаççĕ.

Ĕлĕк-авал тур кĕтесси
Сăваплă вырăнччĕ чăвашшăн.
Тухатчĕ шăп хресчен сасси
Турăш умне пырсан йăвашшăн.

Вăл тилмĕретчĕ чĕререн,
Телей пайти пурра шанатчĕ.
Анчах Христосĕ кĕтесрен
Таçта пĕр шухăшсăр пăхатчĕ...

Хăв сассуна илтмен вăя
Епле эс, халăхăм, ĕненнĕ?
Çитсен пули-пулми уяв
Чиркĕвелле утма пикеннĕ.

Шуç çĕлĕклĕ çуртсем çинчен
Антенна шăччисем — вуншарăн...
Кĕнĕ чухне уй хапхинчен
Паян çак шухăша эп кайрăм.

Наукăпа тăван сынна
Турăпала халь ултаслаймăн,
Çавраймăн çăтмахпа ăна,
Тамăкпала та хăратаймăн.

Пĕлет: кунçул пăхать хăйне,
Хăй аллинче вылять чĕн чĕлпĕр,
Çирĕп тытать юланутне —
Сукмак йĕрне вăл ан çĕтертĕр.

Наукăпа тăван сынна
Телейсĕр хăвараймĕ пурнăç,
Ентеш чухлать ăна-кăна —
Апла, шăпи ун пулмĕ пăрнăç.

Кашни килте — кăвак экран,
Каç пулттипе, ĕçрен килсессĕн,
Кино, спектакль эс куран,
Тĕрлĕ хыпар-хăнар итлетĕн.

Итлетĕн парти сăмахне
Ун çулĕпе куллен утатăн,
Хайхи леш ырлăх-çăтмахне,
Хăв аллупа хăвах тăватăн.

...Шукăль кермен тăррисене
Яштак антеннăсем тăрлаççĕ,
Кив самана çăви çине
Лартнă хĕрес пек туйăнаççĕ.

1971

## КĔРХИ КĂМĂЛ

Ирех тăратăп.
Кăмăл пахчари
Çăл шывĕ евĕр
Уçă та таса.
Ешĕл каю çинчи
Ĕне чари
Çерем сĕтекĕпе
Пырать тулса.

Шурă упа
Пăрлак лупашкара
Хăй ыйхинчен
Анаслаcа вăраннăн
Кĕтӳ йĕрриллĕ
Тарăн çырмара
Тĕтре хускалкалать —
Хуллен, мăранăн.

Куçа шартать
Илемлĕ кĕркунне.
Вăл чĕмсĕр мар:
Шавлать, юрлать, кĕрлет.
Хуркайăксен
Янравлă сассине
Мотор кĕвви
Хурçăпала витет.

Мĕскер ку?
Пăрлă пĕлĕт пек хура,
Хĕвелĕ те, тӳпи те
Тап-тасах-çке?
Ку тăвăл мар,
Каймашкăн кăнтăра
Курак кĕтĕвĕсем
Пуçтарăнаççĕ.

Улмуççисем
Лараççĕ шăкăрин.
Капансенче —
Июнь шăршиллĕ утă.
Эппин,
Таса та хăтлă фермăри
Пин пуçлă йыш
Хĕл касĕ сывă, тутă.

Чăрик! чĕриклетет
Кусатăран,
Машин рессорĕсем те
Тӳрленеççĕ.
Кĕр мăнтăрне
Ăçтан йăтса тăран —
Ăна çĕршер
Тоннăсемпе виçеççĕ!

Вăрăмтуна — пилеш
Уничере,
Хăшĕ çырли, хăшĕ çулçи —
Пĕлеймĕн.
Вĕл-вĕл хăмач пек
Хĕп-хĕрлĕскере
Эс çĕнĕ çĕнтерӳ
Ялавĕ тейĕн.

Ялйыш,
Сан иксĕлми хĕрӳлĕхне
Юнпа-чунпа
Куллен туйса тăратăп.
Сар хурăнăн
Çавра тенкисене
Çав ĕçшĕн панă
Орденăн куратăп.

1972

## УПРАВЛĂХ ЮРРИ

Юлташ, тăван хире упра:
Сипле, тӳрлет ун суранне.
Хумханĕ тулă сан умра,
Пуянлăх парĕ çĕр-анне.

Юлташ, тăван хире упра:
Ан вырттăр пусă хăйпашка.
Пулинччĕ таврара тăпра
Çĕн хăпарту пек кăпăшка.

Юлташ, тăван хире упра:
Вăл — чыс, вăл — иксĕлми вăй-хал.
Вăл — пирĕн ытарми тупра,
Пире пилет çут ăраскал.

1972

## ЮЛТАШ ЯЛА КАЙСА КИЛСЕН

Юлташ яла çитсе килни çинчен калать,
Ана-кăна аса илет хăй, кулкалать.
Эп унăн сăмахне илти-илтми тăратăп,
Ячĕшĕн çеç хăш чух пуçа сулатăп,—
Эп хам çуралнă ял çинчен шутлатăп·

Хыҫа вӗҫсе юлать улăх-ҫаран,
Чупсах кӗрсе каяп укăлчаран,
Эп ыталап лаштра йăмрасене,
Хӗрсех итлеп хӗрсен юррисене.

Юлташ шкула ҫитсе курни ҫинчен калать,
Калавӗпе мана тӗлӗнтерме шутлать.
Эп унăн сăмахне илти-илтми тăратăп,
Ячӗшӗн ҫеҫ хăш чух пуҫа сулатăп,—
Эп хам вӗреннӗ шкул ҫинчен шутлатăп:
Юратнă шкулăм, эс ялан асра,
Ман шухă чунăм халь те ҫав класра,
Ашшăн пăхса асамлă куҫӗпе
Ҫӳрет учитель парта хушшипе.
Юлташ мана хăй амăшӗ ҫинчен калать,—
«Чӗри ун ылтăн... Шел, халь ватăлать»...
Ун сăмахне илти-илтми тăратăп,
Ячӗшӗн ҫеҫ хăш чух пуҫа сулатăп,—
Аннеҫӗм, эпӗ сан ҫинчен шутлатăп:
Ларатпăр иксӗмӗр юнашарах,
Сывлăхусем епле, пӗлтер часрах?
Ҫăва тухмалăх вутă пур-и сан?
Анне!
Ҫитетӗп сан пата ыран!

1971

## ТĂВАН ШКУЛА

Сентябрӗн
Галстук тӗслӗ ирӗсем
Мана ҫуллен
Ачалăха чӗнеҫҫӗ:
«Шкул алăкӗ яр-уҫă,
Кил, иртсем,
Ахалӗн
Кӗҫ урок пуҫланӗ»,— теҫҫӗ.

Шăнкрав
Йыхравĕпе хавхаланса
Эп партăсем
Хушшипеле иртетĕп.
Учителе итлетĕп
Пăлханса,
Ун ăслă сăмахне
Ăша илетĕп.
Вĕрентекен!
Епле манам сана?

Эс — тĕнчене
Çĕн кантăк касаканĕ.
Çав кантăкран
Йăлтах курнать мана:
Çĕршыв тӳпийĕ,
Тарăнăшĕ,
Анĕ.

Хутла
Нумай пĕлен çынсем тесе
Атте-аннемпеле
Мухтанаймастăп.
Ал пуснă чух
Чĕтревлĕн чĕртерсе
Хĕн курнине çеç
Асăмран ямастăп.

Шур çӳçлĕ
Ватăсем тĕлĕнмелле
Эп çиччĕрех
Шыв юххи пек вулаттăм.
Сĕт шăлĕ ӳкнĕ
Тусăмсемпеле
Ăмăртмалла
Пайлаттăм та хутлаттăм.

Хастар тантăшсем,
Эсир паян
Хĕрӳ ĕçре
Чыспа хисеп илетĕр.
Шахтер, кĕтӳç,
Салтак, нефть уçлакан
Ячĕсемпе
Çĕн пурнăçа кĕретĕр.

Пĕлеп, туссем,
Эсир те ман пекех
Тăван шкула
Тытатăр асăрта.
Умра куратăр
Çав учителех
Çĕнтернĕçем
Тинĕс хумне, сăрта.

1972

## ÇАВАЛ

Хумханать хуллен хăвалăх
Хуллипе йăлтăртатса,
Юх эс, юх, ĕçчен Çавалăм,
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çаврăнса.

Эс çунан часрах тухасшăн
Шупашкарăн тинĕсне,
Эс хăюллăн çулăхасшăн
ГЭС турбинисем çумне.

Аслă Атăлпа каясшăн
Пĕр хăват пулса пĕрле,
Хусана эс çул тытасшăн,
Хусантан — Чĕмпĕрелле...

Малтанах эс пӗчӗк пекчӗ,
Халь куратӑп хӑватна:
Рассей ҫӗрӗн тӗп проспекчӗ
Чунтанах кӗтет сана.

Шарласа иртейнӗҫемӗн
Каҫпие кала салам.
Ентешӳ, чӑваш этемӗ,
Эп сана пуҫа таям.

1971

## ҪӖРУЛМИ

Хура тӑпран
Кӗрхи кӑпкалӑхне
Юман карлав
Хуллен пӑтратнӑҫем
Туха-туха
Выртаҫҫӗ куҫ умне
Шап-шур
Сысна ҫури
Кӗтӗвӗсем.

Эй, ҫӗрулми!
(Вӑрҫа асӑннӑран
Каҫар мана,
Хисеплӗ вулакан.)
Ҫак ҫимӗҫ
Ытлӑх-ҫитлӗхне курсан
Вӑл ҫитменни
Аса килет ялан.

...Ҫуркуннепе
Пуш-пушӑ тӗпсакай.

Тулли пулмашкăн
Майĕ-сайĕ çук:
Ялта кашни çын
Çăкăр та какай
Тӳр кăмăлпа
Фронта ăсатнă чух.

Каяттăмăр эпир те
Кунтăкпа
Хирте хĕл каçнă
Улмана пухма.
Вăл çиеле тухатчĕ
Çумăрпа,
Кăтра кăмпа
Пекрехчĕ вăл пăхма.

Çиеттĕмĕр
Крахмал икерчине
Çу кучченеçĕ
Выртăнне хурса...
Туятăп халь те
Унăн йӳççине.
Чĕлхе тымарĕ
Айĕнчех усрап.

1971

## ХĔЛĔХ АЛА

...Эс алла хĕлĕх ала
Хĕстерсе тытан,
Самантрах улăхалла
Вĕçтерсе анан.

Тавăрса йĕм пĕççине
Чĕркуççи таран

Шетмĕн чĕлтĕрти шывне
Хумхатса пыран.

Тивĕ, тен, килте патак,
Уншăн та хăран.
Пуçăнта — çут йăмпăлтак,
Çатăлти çăрттан.

Çыранри тĕме тапан
Урупа, унтан
Хăвăрт-хăвăрт кăларан
Аллуна шывран.

Ак телей те: алара
Пĕчĕк тусусем.
Йăлтăрти шуç банкăра
Пулĕç кĕç вĕсем.

...Атăлта курмассерен
Пулăçăсене
Асилетĕп эп аннен
Хĕлĕх алине.

1971

## РЕЗИН АТĂ

Кимĕ юхрĕ аната,
Петĕр те ун хыççăн утрĕ.
Шыв витмест резин атта —
Кунчаран кĕрсессĕн кĕрĕ.

Çав вăййа сăнанăçем
Чунăмпа эп çамрăклантăм.

Турăм пĕчĕк карапсем,
Вĕсене инçе ăсатрăм.

Резин атă тенĕрен,
Çăпата çинчен асилтĕм.
Пир тăлла сырса куллен
Эп унпа шкула çӳреттĕм.

Çурлă-кĕрлĕ кунсенче
Ура витĕр шыв юхатчĕ,
Тĕлкĕшен пӳрнесенче
Ун вĕрилĕхĕ тăратчĕ.

Халĕ çав вĕрилĕхе
Чунăм тĕпĕнче туятăп,
Çăпата ĕмĕрлĕхех
Çухалнишĕн савăнатăп.

1970

* * *

Çил йынăшать: «Кĕртсем, кĕртсем,
Хăть кантăкран, хăть мăрьерен».
Вăл кунĕпех хывать кĕртсем
Хăйне никам та кĕртменрен.

Шур мамăка хĕвет, хĕвет.
Çитесшĕн пӳрт çунаттине.
Çĕрле канма ĕмĕтленет
Выртса юр кĕрчĕн хӳттине.

1971

И-43 726

* * *

Çуталса килет шуçăм,
Хĕмленсе, йăлкăшса.
Урама тух халь, тусăм,
Çитет çывăрса!

Çуркуннен пĕрмĕш кунĕ,
Кам ăмсанмĕ, сăнна?
Тарăхать пуль хĕл чунĕ
Курнăçемĕн сана.

Шăрантар, хĕвел, вирлĕн,
Ирттĕр тек ютшăну.
Чĕрчуна ăшă кирлĕ,
Пурнăçа — улшăну.

Юр каяймĕ апрельсĕр,
Халь кайма иртерех.
Ирĕлет сар шевлесĕр
Тунсăхланă чĕре.

1970

* * *

Çурхи хĕвел
Çу пек шăраннăçем
Юр кĕрчĕсен
Ай-хай вилес килмест:
Шăрчĕсене тăратнă, ав, вĕсем
Хир сыснисем пек
Сивĕ те çиллес.

1971

## АПРЕЛЬ ПУÇЛАМĂШĔ

Сăрăхтарать апрель хĕвелĕ
Пурçăн çӳçе пек шевлине.
Тек ĕнтĕ хĕл алли кĕскелĕ,
Вăл тарĕ çурçĕр еннелле.

Курсам, кăштах хускалчĕ Атăл,
Вăранчĕ, тейĕн, ыйхинчен.
Кĕçех хум вылĕ çăтăл-çатăл
Ырми-канми шыв юххинче.

Кĕçех хум вылĕ, ташлĕ, чупĕ,
Туллашĕ. Халлĕхе вара
Мăнтăр тюлень кĕтĕвĕсем пек
Выртаççĕ кимĕсем умра.

1971

* * *

Сăрта хĕвел шевли çуллать,
Çавра çамки шакла юлать.
Шыв çул уçать анаталла,
Атăл енне вăл ăнтăлать.

Вăл тăрмалать ун айккине,
Ун кăкăрне лăскать вăл тек,
Пĕчĕк ача хăй амăшне
Тĕш ыйхăран вăратнă пек.

Атăл, ĕçре ĕшеннĕскер,
Хулăн пăрпа витĕннĕскер,

Хуллен-хуллен йăшаланать,
Кăштах тапраннăн туйăнать.

1971

* * *

Чăлтăр шурă çăлтăр пек вĕçеççĕ
Мамăк евĕр çăмăл пĕрчĕсем.
Лăпкăн-лăпкăн çĕр çине ӳкеççĕ
Хĕл мучи сирпĕтекен хĕмсем.

Тен, санран куласшăн куçкĕретĕн
Пит çине ларассĕ лĕпĕшсем.
Тĕксĕм тӳпене эс тинкеретĕн
Сив туталлă йыш сырăннăçем.

Туйăнать тӳпе хĕрсех ал сулнăн,
Чечекне вăл сапнăçем сапать...
Те кив çул сывпуллашать салхуллăн,
Те çĕн çул хаваслăн саламлать.

1970

* * *

Сар хĕвел çавра питне сăрларĕ,
Каçа хирĕç хăнана васкарĕ.

Çутă шевлепе киленнĕ хурăн
Хĕвеле темччен сăнарĕ хурлăн.

Вăл ăна тытса чарма пикенчĕ:
Çамрăк пĕвĕпе тапса тĕренчĕ.

Кăлăхах-мĕн! Хĕрлĕ кăлтăрмач
Нимĕнле вăя та парăнмасть

1972

## ÇУЛÇĂ

Пĕр ирхине сап-сарă çулçă
Ман кантăкран кĕресшĕн пулчĕ.

Çил алхасса çӳренĕрен-тĕр,
Вĕçсе хăпарчĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр.

Малтан вăл тĕк пекех çĕкленчĕ,
Сив сывлăш хумĕнче чӳхенчĕ.

Ытла çӳлте, тен, кăшт шикленчĕ—
Аялалла анма пикенчĕ.

Унтан пур-çук вăйĕпеле
Васкарĕ кантăк еннелле.

...Ман çĕнĕ тетраде, тен, çулçă
Сăвă пулса кĕресшĕн пулчĕ?

1971

## ÇИЛ ÇИНЧЕ

Туй ачи пекех маттуррӑн
Çӗкленсессӗн çавраçил,
Алӑ çупрӗ шурӑ хурӑн:
— Йӑмра тусӑм, ташша кил!

Хумлӑ-хумлӑ çутӑ тӗкӗр
Пӗрӗнет те сарӑлать.
Кӗмел саслӑ купӑс евӗр
Çавал шывӗ туйӑнать.

1971

## ÇИÇӖМ

Хӗвеланӑç тӑвӑлланчӗ,
Хӗвеланӑç кӑвакарчӗ,
Чӑрсӑр хумлӑ çил-хыпарçӑ
Хурӑн тӑррине тустарчӗ.

Тӗтӗм-сӗрӗм йӑсӑрланчӗ,
Кӳршӗ ял çине утланчӗ.
Аслати — тӳпе хӑвачӗ —
Аллине пусса хӑварчӗ.

1971

## ПИЛЕШ

Йӳçӗ тесе ан ӳпкелеш —
Чипер çырлах иккен пилеш.

Астивнĕçемĕн, асăрха:
Вăл катăркас пек тăпăркка.

Пиçет шевлен сар хĕмĕнче,
Пиçет çĕн юр сулхăнĕнче.

Йӳçĕ тесе ан ӳпкелеш:
Хĕл сĕткенне пухать пилеш.

1971

* * *

Икĕ яштак тирек,
Мăшăр тирек,
Кантăкăмран пĕрле пăхатăр.
Çӳллĕшĕрсем пĕр пек,
Пĕвер пĕр пек,
Мĕншĕн ик еннелле авнатăр?

Элле,
Тӳпенелле çĕкленнĕçем,
Эсир хĕвел шевли тытасшăн?
Е лăпкă çил ачашшăн вĕрнĕçем,
Аллăрсене сарсах ташласшăн?

1972

## АТĂЛ ЧĔЛХИ

Хумсем çапаççĕ çырана
Чăл-пар! Чăл-пар!

Сасси кĕрет ман хăлхана:
Çул пар, çул пар!

Эй, Атăл! Пур-çке сан çулу,
Чуптар, чуптар.
Пур сан киммӳ, пур сан суллу,—
Юхтар, юхтар!

Куратăп иксĕлми вăйна:
Чăл-пар! Чăл-пар!
Тин ăнланатăп эп сана:
Ĕç пар, ĕç пар!

1971

## АННЕНЕ

Лăс тымарлă çамрăк палана
Кăларатпăр çĕрĕ-мĕнĕпе.
Эс карта çуккишĕн кулянан,
— Тытăпăр-ха, пулĕ,— тетĕп эп.

Лартрăмăр, шăвартăмăр ăна.
Ăвăс, хурăн кусрĕç вăрмантан.
Чиепе хура хурлăхана
Парса янăччĕ мана шкултан.

Йăрăс тирексен хӳтлĕхĕнче
Çеçкене ларать пуль халь палан.
Ешĕл йывăçсен вăй картинче
Çӳрĕттĕм, аннеçĕм, санпалан.

1971

## ПОЧТАЛЬОН

Çурхи хӗвел пек сарă та хӗрӳллӗ
Е çӗр пекех çавра саламсене
Сулмаклăн çавăрса хурать те Юля
Виçмешкӗн тытăнать урамсене.

Ăна кӗтет ватти те, çамрăкки те,
Телей пӗрни кашниншӗнех тулли.
Сар хӗр патне савни сăмахӗ çитӗ,
Качча хумхатӗ почтальон кулли.

Чӗреçӗм мӗншӗн талпăнса сикет-ши
Пике куллен çурт умӗн иртнӗçем,
Камран вăл ăшă саламсем илет-ши,
Хăй кам патне ярать-ши саламсем?

1971

## ХУСАН—ШУПАШКАР

— Туссене салам кала,
Яр çитсен хыпар-хăнар...—
Атăл тăрăх тăвалла
Ăсатать мана тутар.

Мӗн тăван, кӗр кунӗ мар-и:
Пӗрӗхме пикенчӗ кӗç.
Пурпӗрех çулаваскарӗ
Хум касан шывçи-чӗкеç.

Ешӗл кăтрине сăрлаççӗ
Куславкка ăвăсӗсем,

Йăрăм-йăрăмăн курнаççĕ
Хурăнсен çут вуллисем.

«Метеор» вĕçет çил витĕр,
Кĕленче çамки çине
Пăрçа пек шултра тар евĕр
Çумăр шывĕ сирпĕнет.

Çамрăксен хули япшаррăн
Тĕтĕрет шур тĕтĕмне.
Тинкеретпĕр Шупашкарăн
Вĕри юнлă шăллĕне.

Йăлăм, çурутрав, хăвалăх,
Симĕс чĕрĕп пек хырсем...
Таврара — кĕрхи кăваклăх,
Таврара — тăван хирсем.

...Атăл чăнкă çырана
Ывăтать хумне вăш-ваш.
Акă пристань те.
Мана
Ытама илет чăваш.

1970

## ÇУРТ ТĂВАКАН ЮРРИ

Çӳллĕ çурт тăватăп эпĕ,
Халиччен пулманнине,
Илĕртен илем кĕртетĕп
Шупашкарăмăр сăнне.

Ăмăрткайăк пек пăхатăп
Çирĕм иккĕмĕш хутран.
Хĕвеле те, уйăха та
Эп куратăп çывăхран.

Юнашар юхать çут Атăл,
Чуптарать хуллен хумне.
Юррăмпа эп ăсататăп
Çĕн керменĕн саламне.

Хĕмленсе тухать вăй-халăм
Хавхаланнă чĕремрен.
Ыйăнми вылять ик аллăм
Пархатарлă ĕçĕмре.

Çӳлерех кармаш та туртăн,
Кур эс Кремль çăлтăрне.
Ăшă çуртăм, капăр çуртăм,
Ырă çыншăн пул парне.

1972

* * *

Корпуссем, корпуссем,
Пĕлĕте кармашатăр,
Пăхаттир пек сăнатăр
Çĕнелен таврана.
Хурçăланă саспа
Тĕнчепе каласатăр,
Ĕмĕре юлас юррăн
Илтĕнет вăл мана.

Тусăмсем, тантăшсем,
Стройкăри харсăр халăх,
Аттесем рейхстага
Илнĕ чух çырнă пек,
Хытайман штукатурка çине
Асăнмалăх
Ал пусса хăварар-и
Мастерок вĕçĕпе?

1972

## ТАРКĂН

Кайрĕ-и?
Кайтăр, кайтăр,
Телейне пĕччен вĕççĕн шыратăр...
Анчах
Темиçе çултан
Пире ăнсăртран тĕл пулсан,
Куçне вăрă пек вăл пытарĕ,
Часрах пăрăнса утĕ,
Тарĕ.

Çук, шел мар. Кайтăр, кайтăр,
Хулара ăшă вырăн шыратăр.
Вутпуççи чĕрепе комсомол билетне
Усраймăн, тăванăм, пĕрле ниепле.
«Таркăнра иртнĕ ĕмĕр...»
Калама та хăрушă.
...Шăппăн-шăппăн ĕçлерĕмĕр
Пурте пĕр хушă.

1971

* * *

Апреле
ӑмсанать раштав касӗ:
Укӑлча умӗнчи хӑвасем
Кӑпӑш кӑчкӑ кӑларнӑн курнассӗ
Таврана шурӑ пас тытнӑсем.

Августа
ӑмсанать кӑрлач касӗ:
Мӑнтӑр кӗр — унӑн тӗлӗкӗнче.
Пучахсем сӗрӗшсе хумханассӗ
Пӑрланан кантӑк кусӗсенче.

1972

* * *

Икӗ чӑваш хули хушшинче,
Шупашкарпа Канаш сулӗ синче
Татти-сыпписӗрех машин чупать,
Силсунат пек кашни пӗр ыткӑнать.

Яка шоссе кӗр! кӗрлесе тӑрать,
Хитре ӗнернӗ хӗлӗх пек янрать.
Пин-пин мотор калать хӑй кӗввине,
Юрлать телейлӗ пурнӑс юррине.

1971

* * *

Тӑван кӗтес вӑрттӑнлӑхне
Эп пӗр ирпе сӑнарӑм,

Кĕрхи çанталăк юмахне
Вара çапла ăнлантăм:

Хĕвел чăпăл тăвать ире,
Калать:
— Маттур пул, ывлăм!
Шыв пăсланать — вăл шур тĕтре,
Шыв сирпĕнет — вăл сывлăм.

1971

## ÇУМĂР ХЫÇÇĂН

Урамсенче ĕнетчĕ курăк,
Типетчĕ çырмара пĕве.
—Чăнах, çилленчĕ пулĕ турă,
Йăлтах пăрахрĕç чиркĕве,—
Тесе мучи мăкăртататчĕ
Çамки çинчен шăлса тарне,
Тӳпе сасартăк карчĕ ячĕ
Тачка та йывăр каррине.
Çӳлти сунтал, янранăçемĕн,
Йăл-ял вылятрĕ хĕлхемне,
Ташша кăларчĕ хӳхĕм çемĕ
Чĕркĕмĕл пек тумламсене.
Шерпет сыпать, ав, тулă хирĕ,
Ачашшăн чӳхенет пахча
Озонлă сывлăш уçă, нӳрĕ —
Пӳрте кĕрес килмест пачах.
Хĕвелĕн иксĕлми хăвачĕ
Çиçет сĕвек кĕперĕнче,
Асамлă йывăçăн турачĕ
Вăй илчĕ тейĕн уйсенчен.
1969



# САЛТАК ТЕТРАЧĔ

## ТĂВАН СĂМАХ

Ялта чухне куллен хире тухаттăм,
Ĕçлеттĕм савăк юрă çеммипе.
Каç-каç вара çĕр çĕмĕрсе ташлаттăм
Вăййа иленнĕ тантăшăмсемпе.

Çуралнă килĕм, инçете эс юлтăн,
Эс — хурçă пуйăс шавĕ хыçĕнче.
Халь сан сăну — ялтан килен шур хутăн
Чуна вăй-хал кӳрен йĕркисенче.

Салам, çут çăлтăрлă, хастарлă халăх!
Эс манăçа хăвартăн тунсăха:
Салтакăн ĕçĕ — пиçĕ хул ырмалăх,
Салтак кулли — ăш выртмалла паха.

Анчах та ман ентешсене тупасчĕ,
Атте-анне чĕлхипеле, хĕрсе,
Çăвар туллин, техемлĕн калаçасчĕ
Пуплев кĕввийĕн юхăмне кĕрсе.

Вырăс чĕлхи, паллах, вун хут ятуллă,
Тăван сăмах — чĕрешĕн çывăхрах.
Эп унсăр — тип кӳлленчĕкри чĕр пулă,
Эп унсăр хама хам туяп чăлах.

Пĕрре чăваш юрри — ман хĕнĕм-тертĕм —
Янрарĕ кайрĕ каннă вăхăтра.

Аслисене пĕлтертĕм те — вĕçтертĕм
Çитсе те тăтăм темĕн самантра.

Уçланкăра ай-хай шăрантараççĕ,
«Ан, авăн, шĕшкĕ» тыткăнлать чуна.
Унтан хăйсемпеле паллаштараççĕ
Йĕркипеле çĕнĕ туссем мана.

Хастарлăх паллисем çиçсе тăраççĕ
Патвар та анлă кăкăрсем çинче.
Пĕлетĕп: чăвашсем ята ямаççĕ
Кунта, çĕр тĕрлĕ халăх хушшинче.

Вĕсен кашни ыр сăмахне çăтатăп,
Ман, çамрăккин, вĕренмелли нумай.
Эп хамшăн çывăх сăнсене куратăп
Чĕлхем сулмаклăхне шайлană май.

Ун чух епле хăпартланса калаçрăм
Çĕршыв çинчен, салтак шăпи çинчен,
Кайăк пулса пин-пин хир урлă каçрăм,
Çӳререм Турикас урамĕнче.

Тăван сăмахăм!
Çепĕç эс, мăнаçлă,
Инçе çĕрте — виç хут илемлĕрех.
Эс илтĕнсен, çав лупасайлă, лаçлă
Йăмраллă ял ялан манпа пĕрле.

Шур Шупашкар та умăмрах,
Мускав та,
Умрах — çут Атăл хумĕсен çилхи.
Эп сан чысна хĕçпăшалпа сыхлатăп,
Ман ĕмĕт, шанчăк, юрату чĕлхи.

1972

# САЛТАК ЧĔРИ

Ăна куçпа пăхса виçеймĕн,
Вăлтса тĕпчеймĕн сăмахпа,
Вăл хăй çĕршыв! Хитре хĕлхемĕн
Çунать вăл паттăр тунсăхпа.

Салтак чĕри — тĕнче пек аслă,
Пин-пин илем çав тĕнчере:
Тăван ялти каçхи хаваслăх,
Ирпе шуса килен тĕтре...

Хĕвел ăшшиллĕ çумăр шавĕ,
Уй-хир юххи, ăрша чуппи,
Катрамлă пĕлĕтсен чаршавĕ,
Чĕвĕлтетен чĕкеç чĕппи.

Тантăшусем вăййа тухаççĕ
Уйăх пĕкки çуталнăçем,
Хурлăхан пек куçсем сапаççĕ
Сан çинелле хĕрӳ хĕлхем...

Атте-аннен хистев-халалĕ —
Кăвар чĕрен шăп варринче.
Çĕршыв чĕнсессĕн, вăл хускалĕ
Салтакăн анлă кăкринче,

Вăл çичĕ ютшăн вилĕм пулĕ,
Вут-хĕм тăкса пыран çĕмрен.
Е сыхлăх кучченеçĕ — пуля:
Ан тив, ан уртăр ӳлĕмрен!

Енчен, пĕччен ӳксе юлсассăн
Пĕр-пĕр тан мар çапăçура,
Тăшман, мана курса ан хапсăн,—
Тăваймăн пурпĕрех чура!

Асту: чеен йӑпӑлтатсан та,
Сӗнсен те йӗрӗнчӗк мулна,
Витӗр вӗри тӑхлан тухсан та
Чӗрем ҫунать ҫӗршывшӑнах.

1971

## АМӐШӖ ЫВӐЛӖН ПАЛӐКӖПЕ КАЛАҪНИ

Ҫук, нихҫан, ӗмӗрте те
Ӗненмӗп эп, ывӑлӑм,
Эсӗ ҫичӗ ютра
Ик куҫна хупнине.
Ҫыруне комиссар
Йӑнӑшпа кӑна ҫырнӑ вӑл,
Эп пӗлеп вӑрҫӑра
Ун пекки пулнине.

Вӑтӑр ҫул...
Вӑтӑр ҫул
Ҫӗршыва хураллатӑн,
Ӑнланатӑп эп, ывӑлӑм.
Санӑн чунна.
Пӗчӗкрен, ачаран
Салтака юрататтӑн,
Салтакахчӗ аҫу та,
Хывнӑ эс аҫуна.

Шӑп вунсаккӑр пуссан
Эс вӑрҫа тухса кайрӑн,
Пуйӑсна ӑсатма та
Пыраймарӑм, каҫар.

Кӗтрӗм ир, кӗтрӗм каҫ...
Ах, мӗнле-ши чӑтайрӑм?
Кайпӑр, ывлӑм, киле,
Килсӗр пурнӑҫ начар.

Ҫук тесе ан вӑтан:
Халь колхоз ураланчӗ.
Кивӗ пӳрт те ҫӗнелчӗ,
Пурӑнатпӑр аван.
Юрӗ-варӗ те пур,
Тӑхӑнма та тупатпӑр,
Тултӑр кил ӑшчикки,
Кӑштах кан та авлан.

Кинлӗх пур ман пӑхни,
Сан пекех яштак пӳллӗ,
Улӑхри чечек пек
Икӗ куҫӗ кӑвак.
Ӗҫӗнче те ӗҫчен,
Ҫын ҫинче — килӗшӳллӗ,
Вӑйӑра тӗл пулсан
Ак юратӑн хӑвах.

Йӗтӗн пир тӑрӑхне
Упраса эп усратӑп,
Сарса хурӑп тесе
Кӗҫӗн ҫын кӗнӗ чух.
Хӑнине ыр пулма
Сӑрине те юхтарӑп,
Сӗтеле сӑн кӗртме
Ытлӑ-ҫитлӗ сӗт-ҫу...

Ма чӗнместӗн, ачам,
Ырлӑха ырламастӑн,
Е хурал тӑнӑ чух
Юрамасть-и чӗнме?

Йĕркине тытмаллах.
Эс ăна ăнланатăн.
Сир, эппин, шухăшпа
Çĕрлехи кичеме.

Анчах пĕл: ĕмĕрте те
Ĕненмĕп эп, ывăлăм,
Эсĕ çичĕ ютра
Ик куçна хупнине.
Çыруне комиссар
Йăнăшпа кăна çырнă вăл,
Эп пĕлеп
Вăрçăра ун пекки пулнине.

1972

## ИЮНĔН 22-МĔШĔ

Çунатлăн
Çĕкленет çап-çутă шуçăм,
Пăхсан,
Чуна чĕп-чĕр вăй-хал пиллет.
Епле тасалăх!
Чикĕре тăруçăн
Тухăç тĕсне кăна
Сăнас килет.

Сас-чĕвĕ çук.
Эс хăв та шăп çӳретĕн
Саламласа
Çĕн кун пуçламăшне.
Тем пулнă пек
Сасартăк кăрт! сикетĕн
Аса илетĕн
Хĕвеланăçне.

Вăр-вар çеç
Çаврăнса тепĕр енне
Тăнлатăн эс
Ирхи чĕмсĕрлĕхе:
Хĕрĕх пĕрремĕш çулăн
Пĕр ирне
Асра тытать кашни
Ĕмĕрлĕхе.

Чăмăртанаççĕ
Санăн аллусем,
Йăлтăртатать штык
Сывлăм çутипе.
Утту çирĕпленет
Васканăçем
Татти-сыпписĕр
Пост маршручĕпе.

Вара,
Манса çурхи çанталăка,
Чикке сыхлан
Татах та тимлĕрех.
Итлетĕн чĕрери диалога:
— Эс хатĕр-и?
— Çапла, эп хатĕрех!

1971

## ÇĔРШЫВ ПУÇЛАМĂШĔ

Дневальнăй курасран-ши
Шикленеççĕ
Ачалăхри
Чарусăр тусăмсем?

Казармăна ура вĕççĕн
Иртеççĕ,
Иртет шур çӳçлĕ,
Шухăшлă аннем.

Çурма тĕттĕмлĕхре
Сăнать йăвашшăн
Вăл лăпкă çывăран
Салтаксене.
Часрах вăл
Хăйĕн ывăлне тупасшăн
Пырса ларасшăн
Шăппăн ун çумне.

Аннем нумай та
Лараймасть, каять.
«Хăвна чипер
Тыт,— тет,— эртел çинче».
Унтан
Юри кăшт юларах кая
Кĕретĕн эсĕ.

Хăмăр куçсенче—
Анаткасри
Çĕмĕртлĕхсен илемĕ...
Сан сисĕмлĕ те
Уçă сассуна
Эп ĕмĕрлĕх
Чĕре çумне илем-и,
Илем-и, тусăм,
Ăшă сăмахна?

— Тревога!
Самантрах
Сиксе тăратăн,
Çакан кутамккуна,

Автоматна.
Танку патне эс
Çиçĕм пекваскатăн,
Кĕçех çула тухатăн—
Хуш кăна.

Вара,
Полигона ыткăннăçемĕн,
Вăлтатăн эсĕ
Тĕлĕк тĕшшине.
Каллех
Тăван яла аса илетĕн,
Умра куран
Çĕршыв пуçламăшне.

1971

## ТУС

Туртать, тĕлкĕшет чĕр суран,
Эмел пăтратать ăшăма.
Куçа эп уçап та аран —
Куратăп умра тусăма.

Шап-шур чӳрече каррисем..
— Ăçта эпĕ?
— Госпитальте.
Амантăн понтон хывнăçем
Лере, шыв шавланă çĕрте.

Приказ пурнăçланчĕ аван:
Мухтарĕ комдив кĕпере.
Танксем Двина урлă каçсан
Пурне те тав турĕ пире.

...Итлетӗп сапер сассине.
Вăл ларнă чухне çумăмра
Суран кусрĕ, тен, ун çине:
Туятăп хама çăмăлрах.

1971

* * *

Çук, вăрçă мар ку, вӗренӳ кăна,
Анчах та унтинчен канлех те мар-тăр:
Сăрт çамкинчи пӗр чăтлăх вырăна
Çӗрле виççӗмӗш хут атакăлатпăр.

Салтаксемпе пӗр харăс, ăмăртса
Хура тӳпе кӗрлет татти-сыпписӗр,
Çиçӗм çиçет, такам шăрпăк çутса
Хăравçă чунсене шыранă евӗр.

Шуса пыратпăр, кӗç янрать урра!
Çак хăвата камах чарма пултарӗ?
...Кашни пӗлет: чăн-чăн çапăçура
Халь тăрăшни пире çич хут вăй парӗ.

1971

## УЙРĂЛУ САМАХӖ

Строй умӗнче
Вуларӗç çӗн приказ.
Ман тантăшсен
Киле таврăнмалла.

Пĕлеп: кĕтет
Йăмраллă Уйрикас,
Кĕтет ĕççи
Ик вăйпитти алла...

Анчах
Мĕнле-ха хăварам сана,
Чĕлхесĕр тусăм,
Чĕмсĕр автомат?
Илсе кăкăр çине
Çаксассăнах
Чĕр вăй кўреттĕн
Чикĕре тăма.

Сиксе тухатчĕ
Ăнсăртран пăши,
Хăш чух
Ик уралли те пыркалатчĕ...
Санпа —
Чун тĕпĕнче те
Çукчĕ шик —
Эпир нихçан та
Каялла чакманччĕ.

Çапла,
Эс вакламан сăмах-юмах,
Çĕршыв хушсан —
Калаçнă тĕрĕс, паттăр.
Хура мишень,
Эс сасă парсанах,
Тўпех ўкетчĕ,
Лартайса кăна тăр...

Мĕн чухлĕ
Ырă турăн эс тусна:
Хам тивĕç умĕнче

Таса ман ятăм!
Юлашки хут
Халь тав тăвам сана,
Калашников
Кун панă автоматăм.

...Тепĕр салтак
Тытать сана паян:
Хăнăхманран,
Ан ютшăн эс унран.
Чулхуларан вăл. Йăрăскер.
Кайран,
Çитейĕ те, ирттерĕ те манран.

Сыв пул!
Ман — каясси, сан — юласси.
Тракторăмпа
Тухсан колхоз хирне
Аса илтерĕ
Çĕн суха касси
Çĕршыв чиккин
Кăп-кăпăш тăприне.

1972

## КĔРКУННЕ

Салтак ирпе шăлса тасатрĕ
Строй утмалли çула яка.
Анчах та сапнăçемĕн сапрĕ
Сап-сарă çулçине çăка.

— Эй, кĕркунне! Паян черетсĕр
Наряд паратăп ак сана,

Текех ан пул çапла тирпейсĕр,—
Тесе шӳтлерĕ старшина.

1971

## УЙĂХ

Саланатчĕ çăлтăр туйĕ...
Ыр сунса иксĕмĕре
Кĕмĕл ывăс евĕр уйăх
Чӳхенетчĕ тӳпере.

Пĕр салхуллăн, пĕр вăтаннăн
Вăл сапатчĕ çутине
Улмуççи айне пытаннă
Пĕчĕкçеç тенкел çине.

Вăрах мар телейлĕ вăхăт.
— Сан сăнна курас килсен
Тӳпене каç-каç эп пăхăп,—
Терĕн эс уйрăличчен.

...Инçетре постра тăратăп.
Çурхи ăшă каçсенче
Санăн куллуна куратăп
Тулли уйăх сăнĕнче.

1962

* * *

Килте, тен, ывăлне кĕтсе
Аннеçĕм мамăк вырăн сарнă

Анчах шинеллĕ йĕкĕтсен
Кил-çурчĕ — вăрманти казарма.

Кинлĕх тесе пускил хĕрне
Аннеçĕм куç хывать пуль вăрттăн,
Эп автоматăм затворне
Юлташ пек чăмăртатăп хыттăн.

Уртсан сар кĕрĕк кĕркунне
Пире чун савнисем кĕтеççĕ,
Каç-каç тухса уничене
Мăн çул çине пăхса илеççĕ.

Эпир анне юратăвне,
Хĕр тунсăхне чунра упратпăр,
Тăван çĕршывăн чиккине
Çав хĕлхемпе хĕрсе сыхлатпăр.

1968

## ВĔРЕНМЕЛЛИ ТРЕВОГА

Кăвак çутлах хваттер шăнкравĕ
Янрарĕ шăплăха сирсе.
«Хăна-и е хыпар-хăнар-и?»
Васкавлăн тăтăм эп сиксе.

Салтак пек хăвăрт уралантăм,
Кĕç шăлтăртатрĕ çăраççи.
Яш çын камне тӳрех ăнлантăм:
Çар комиссарĕн йыхравçи.

— Тревога.
Çавăнта чĕнеççĕ...—

Тесессĕн лăпкă сассипе
Çуран машинпала вĕçтерчĕ
Ирхи хула урамĕпе.

Эп утнăн-чупнăн хăвăрт кайрăм:
Çитес, мĕн хушнине тăвас.
Паллах, кăштах шикленчĕ арăм,
Анчах та манăн чун хавас.

Çарта чухне сахал-и чупнă
Çав сăмахран хăват илсе.
Тем самантра тапратнă, чухнă
Йывăр танка ĕрĕхтерсе.

Вара çĕр чĕтретсе çӳренĕ
Полигонта пăч тĕттĕмре.
Етре тĕл тивертме вĕреннĕ
Е ларнă шăппăн хӳтлĕхре.

Хăш чух ай-хай вĕри килетчĕ,
Анчах та чăтнă, нăйкăшман.
Çак саккуна аван пĕлетчĕç:
«Унта е эсĕ, е тăшман».

...Ман шухăш хĕрнĕçемĕн-хĕрчĕ
Яшланчĕ чун кăкăрăмра.
Ятарласа пырса чĕнтерчĕç,
Эппин, эп халĕ те стройрах.

1972



# САНА МАН ПАРНЕҪӖМ

* * *

Ирсеренех хĕрӳ хĕвел пулса
Эс ман умма тухатăн ярăнса.

Пуçран ăш çил-и лăпкаса илет—
Ачаш аллу сан асăма килет.

Лĕп çумăр хыççăн ӳкнĕ асамат
Сан сарă çиветӳ пек туйăнать.

Тăнланăçемĕн шăпчăк сассине
Илтетĕп эпĕ эс юрланине.

Именчĕк çăлтăр янкăр тӳперен
Чĕнет мана сан евĕр каçсерен.

1959

## ХĔЛ ЛАРАТЬ

Хĕл ларать...
Вĕл-вĕл çунатлă
Çăмăл-çăмăл лĕпĕшсем
Тӳперен каллех ынатлăн
Таврăнаççĕ хĕвĕшсе.

Хĕл ларать...
Çулла çăкалăх
Пыл сĕнетчĕ хăнине.
Халь мĕнпе-ши ыр пулкалĕ —
Тек пухать шур хуртсене.

Хĕл ларать...
Чие пахчи те
Мамăк тутăрне çыхать.
Çыхтăр, капăрлантăр ĕнтĕ,—
Çил тухсан салтса ярать.

Хĕл ларать...
Хаваслă тунсăх
Тĕтрине сирет тĕнче.
Эп сана куратăп, тусăм,
Юр чаршавĕ хыçĕнче.

1972

* * *

Эс ĕçрен таврăннăçем
Туфлисем шаклатнине
Инçетрен туять чĕрем,
Туртăнать вăл сан енне.

Иккĕн утнă çул çинче
Асилен-ши эс мана,
Çĕрлехи сменăсенче
Хăв çинчен шутлакана?

Асилен-ши эрнипех
Тĕлпулу пӳрменнине,

Уйăхпа хĕвел пекех
Уйрăмшар çӳренине?

1970

## НИКАМА ТА АН КАЛА

Йăрăс хурăн, ешĕл хурăн,
Симĕс тутăр, шур кĕпе.
Укаланнă улăх урлă
Эпĕ утрăм савнипе.

Эпĕ утрăм савнипе
Юрату сукмакĕпе.
Хурăн, сисрĕн пулмалла—
Никама та ан кала.

Тăрă Шетмĕ, хумлă Шетмĕ,
Кĕмĕл карлăклă кĕпер.
Чун-чĕрешĕн каç кĕске-мĕн —
Ир ирлерĕмĕр эпир.

Эпĕ каçрăм савнипе
Юрату кĕперĕпе.
Шетмĕ, илтрĕн пулмалла —
Никама та ан кала.

Çĕнĕ уйăх çӳл тӳпешĕн —
Ылтăн тĕслĕ куç харши.
Çак телейлĕ каç мĕскершĕн
Вăрăмрах пулмарĕ-ши?

Эп каласрăм савнипе
Юрату сăмахĕпе.

Уйăх, куртăн пулмалла—
Никама та ан кала.

1972

* * *

Кăнтăрлапа
Хуллен ирĕлтеретчĕ,
Ир-каç вара
Пуш уйăх вĕçĕнче
Çăпатасем
Пит хăвăрт çĕтĕлетчĕç,
Куплак та
Сӳсленетчĕ пăр çинче.

Мĕскер вăл çăпата?
Тытсан, сапланĕ.
Юлас мар çеç
Каçхи вăй картинчен.
Унта капланнă
Шетмĕн шавлă анĕ,
Тата, юлсассăн
Намăс туссенчен.

Тихасем пек
Тĕпĕртетсе анатпăр
Шыв кукринчи
Типейнĕ çĕр çине.
Ял тăтăр янраса —
Юрра яратпăр,
Хăват кӳрсе
Çурхи шыв сассине.

Çумра —
Хам тантăш хĕрача...
Кăварăн
Ик ал пĕрне-пĕри
Ăшăтнăçем,
Чун тĕпĕнче —
Епле ăна пытарăн! —
Хĕлхемленеççĕ
Çĕнĕ туйăмсем.

Эй, çамрăклăх!
Вунпиллĕкри хаваслăх!
Эс картрăн тарăн
Хăвăн паллуна.
Хам ĕмĕртен
Халь çуррине катас-тăк
Эп чупăттăм
Каллех çав вырăна.

Çурт çунаттин
Пăр йĕкисем тумлаççĕ
Хĕвел тути
Ачашшăн ĕмнĕçем.
...Çăп-çăмăл карусель пек
Çаврăнаççĕ
Куç умĕнче
Ачалăх кунĕсем.

1971

* * *

Килте-ши,
Килте мар-ши?
Кĕрес-ши,
Кĕрес мар-ши?

Хăюсăррăн пусатăп
Эп алăк хăлăпне,
Именчĕклĕн уçатăп
Кăвак калинккене.

— Эсир-çке ку... Иртсемĕр...—
Тет амăшĕ мана.—
Ирех кĕтетчĕ Петĕр
Пакунлă хăнана...

Тен, кĕтнĕ те пуль Петĕр
Хăйĕн çарти тусне.
Анчах ăçтан вăл пĕлтĕр
Эп мĕншĕн килнине?

Сĕнет вăл:
— Ĕç-ха эсĕ...
Шаккар!
...Ăна манса
Кĕтетĕп эп Луиза
Хĕвел пек тухасса.

1971

## ÇУМĂРПИ

Кĕме ĕлкĕртĕн кăна,
Лартрăн çеç чăматанна,
Çиçĕм пăхрĕ тӳперен,
Тăкрĕ ячĕ çӳпçерен.

Чĕрлĕх сипетне ĕмсе
Ашкăрать сĕлли, урпи...
Эсĕ килтĕн пуль илсе
Çумăра, ман Çумăрпи.

1971

# МАНАН ÇĂЛТĂР

Мĕн вăл çăлтăр, мĕн вăл çиçĕм
Юрату хăвачĕ çумĕнче?
Эс пулсассăн, чун савниçĕм,
Йăлтăрать-çке маншăн пур тĕнче.

Маншăн мĕн вăл тасти çăлтăр
Юратсассăн пĕр-пĕрне?
Сан куçу çеç çунса тăтăр
Ирĕн-каçăн чĕрере...

Сăртсем урлă, тайга витĕр
Пире сиввĕн кĕттĕр юрлă ту.
Пурпĕрех çитес çĕре çитетпĕр
Кăкăрта çунсассăн юрату.

Маншăн мĕн вăл тасти çăлтăр
Юратсассăн пĕр-пĕрне?
Сан сăну çеç йăлтăр-йăлтăр
Çиçсе тăтăр чĕрере.

Мăшăр йĕлтĕр йĕрĕ евĕр
Юнашар выртинччĕç çул-йĕрсем.
Юнашар пулсассăн, ĕмĕр-ĕмĕр
Арăскаллăн тапĕç чĕресем.

Маншăн мĕн вăл тасти çăлтăр,
Юратсассăн пĕр-пĕрне?
Сан куллу çеç шăнкăр-шăнкăр
Юхса тăтăр чĕрере.

* * *

**(В. Федоровран)**

Калан савса:
— Ан пăх хĕрсем çине!
Тăванăм, ан кулян,
Пурнаймăп сансăр.
Анчах
Эс тĕнчере чи хитрине
Епле пĕлем
Çынпа танлаштармасăр?

1971

## МĂШĂРЛАНУ КЕРМЕНĔ

Алăк тăрне тăваткăл тĕр тĕрленĕ,
Салам сăмахĕ çырнă ун çине.
Телей пиллет мăшăрлану керменĕ
Тин çеç çуралакан çемьесене.

Йĕпкĕн хура костюм, шап-шур пĕркенчĕк,
Хальхи пек пулĕç ĕмĕр юнашар...
Анчах мĕскершĕн, курнă евĕр шар,
Чĕреçĕм манăн туртăшма пикенчĕ?

...Ун чух умра кермен йăлтăртатмастчĕ,
Чĕвен тăмастчĕç капăр «Волгăсем»,
Çара çуна сулнăкалла каятчĕ
Колхозăн çӳрен учĕ юртнăçем...

Çапла, савниçĕм, каçрăн эс уй урлă,
Çапла эс илтрĕн кĕçĕн çын ятне.

Нимех те çукчĕ,
Çакă çеçчĕ пурлăх:
Ялан туртатчĕ пĕр-пĕрин патне.

Çав туртăм икĕ ĕмĕре те çитĕ,
Пурнатпăр мăшăр кăвакарчăн пек.
Кермен тĕлне çитсен:
«Кирлех йăли те»
Тесе эс лăпкăн калаçан тек-тек.

Алăк тăрне тăваткăл тĕр тĕрленĕ,
Салам сăмахĕ çырнă ун çине.
Телей пиллет мăшăрлану керменĕ
Тин çеç çуралакан çемьесене...

Шăллăмсемпе йăмăкăмсем! Пиллетĕп,
Пуласлăхра сунатăп ырлăх çеç.
Анчах ан манăр: ниепле кермен те
Чунри хĕлхемсĕр ырлăх кӳреймест.

1971

* * *

И, хум чупать,
Çивчĕ хум чупать.
Шур çилхине
Хĕç евĕр вылятса.
Кимĕç ишет,
Çыран енневаскать,
Ик кĕсменне
Çунат пек сулласа.

И, çил вĕрет,
Çил çĕклентерет,
Кимме
Шыв леш енне хăвалать.
Каччăпала
Çӳл çыранри хĕре
Часрах пĕрлештересшĕн
Кускалать.

1971

## АН КАЙ, САВНИ

Çут уйăх шунăçем
Çунаççĕ çăлтăрсем,
Çăлтăрсем çеç çунаççĕ-и паян?
Эс те туян аван,
Эп те туяп аван:
Çунаççĕ пирĕн çамрăк чĕресем.

Тухăç хĕрелнĕçем
Юрлаççĕ шăпчăксем,
Шăпчăксем çеç юрлаççĕ-и паян?
Эс те туян аван,
Эп те туяп аван:
Юрлаççĕ пирĕн шухă чĕресем.

Ан васкасам, савни,
Кăштах тăхта, савни,
Ан кай, савни, юлмастăп эп санран.
Эс те туян аван,
Эп те туяп аван:
Ялан пĕрле пуласшăн чĕресем.

1970

## ПĔРРЕМĔШ ÇЫРУ

Кăчăр-кăчăр çурхи юр,
Сӳсленет куплак.
Ăшăмра сăмахăм пур,
Ах, чĕлхем пуклак.

Манăн сылтăм кĕсъере —
Эсĕ чикнĕ хут.
Эй, сикет паян чĕре —
Хунă тейĕн вут.

Пытанса вулап пĕччен,
Тыткăнлать куçа
Капăр саспаллисенчен
Тирĕннĕ шăрçа.

1972

* * *

Сирĕн ялăр пĕчĕкçеç:
Пĕтĕмпе те пĕр урам.
Çурт çине тăвать чĕкеç
Йăвине кăвак тăмран.

Çавра кӳлĕ хĕрринче
Чăштăр хăмăш хумханать.
Çавăнта пĕррехинче
Эп тĕл пулнăччĕ сана.

Каçсерен çак айлăмра
Эпир ларнă шуçăмччен,
Тĕлĕретчĕ ват йăмра
Ирхи çил хускаличчен.

Шутламан та эп хӗре
Ун пекех чун савасса,
Саншӑн усӑлчӗ чӗрем
Тӳррӗн, шанчӑклӑн, тасан.

Ман умри мӗнпур сӑна
Эсӗ хутӑн хупласа,
Халь пӑхатӑн хӑв кӑна
Çиçӗм евӗр çунтарса.

Эпӗ кайрӑм кӑнтӑра
Тӑван çӗрӗн чиккине.
Вырнаçтартӑм кӑкӑра
Çавӑ пӗчӗк тӗнчене:

Карниссем çине чӗкеç
Çавӑрать йӑва тӑмран.
Ялӗнче — пӗр эсӗ çеç
Салтакна кӗтсе пурнан.

1971

* * *

Эп иртсе пыраттӑм сирӗн умӑртан.
Чӑтӑм çитеймерӗ: пӑхрӑм кантӑкран.

Вучахра çап-çутӑ ялкӑшать кӑвайт,
Тӗтӗм ункӑн-ункӑн тӳпеневаскать.

Тусӑм, çав кӑвайт пек манӑн ӑш çунать,
Эсӗ çеç курмастӑн çулӑмри чуна.

Виçӗ ретлӗ купӑс, янӑрат яла,
Пикене çав вӑрттӑн сӑмаха кала.

1971

## САН КУÇУСЕМ

Чăн тӳпере çич çăлтăр мар, ик çăлтăр!
Чăн тӳпере çич çăлтăр мар, ик çăлтăр:
Йăлкăшаççĕ санăн хăмăр куçусем,
Умăмра çиçсе тăраççĕ çутисем.

Чăн тӳпере çич çăлтăр мар, ик çăлтăр,
Чăн тӳпере çич çăлтăр мар, ик çăлтăр:
Сирпĕтеççĕ сивĕнми вĕри хĕлхем,
Çунтараççĕ çамрăк чĕрене вĕсем.

Чăн тӳпере çич çăлтăр мар, ик çăлтăр,
Чăн тӳпере çич çăлтăр мар, ик çăлтăр:
Савнă тусăм, эс ачашшăн пăхнăçем,
Юратни çинчен калаççĕ куçусем.

1972

* * *

...Пӳрнипе чӳрече кантăкне
Шаккаса чунăма çӳçентерчĕ.
Кам-ши ку?
Эсĕ пуль, ахăртнех,—
Эс çапла ашкăнса çӳрекенччĕ.

Эп сăнап
Тĕттĕм каç сĕмлĕхне
Пахчара йывăçсем шăп лараççĕ.
Туртăнса çутă кантăк енне
Чиесем кантăка çапăнаççĕ.

1971

* * *

Çурăлатчĕ мăкăнь чĕремре,
Хăлхара шăпчăк юрри янратчĕ.
Кăмăлăм пурнас ĕмĕрĕмре
Тăршшĕпех çапла пулса пырсанччĕ!

Çитрĕн эсĕ. Пăхнă-пăхманах
Пит çинчен тасрта йăл куллăм кусрĕ.
Чунăма эс сапнă сив сăмах
Чечеке пăр çапнă евĕр хуçрĕ.

1972

## ПАРНЕ

Ил, савниçĕм, хĕвел шевлине,
Пул ун евĕр чипер те хĕрӳ,
Ан вăтан, ил чечекĕн сăнне —
Тивĕç çав парнене сан чĕрӳ.

Асамат ӳпĕнет çĕр çине...
Савнă тусăм, илсем ĕмĕре
Ик чĕрен иксĕлми ăшшине
Пĕрлĕхре тытакан кĕпере.

1971

* * *

Салтак тӳми, ем-ешĕл шăнкăрав,
Утмăлтурат, чăп-чăмăр тункăрма

Илсе килсеттĕм эп Шупашкара
Сана ял шăршине тутантарма.

Виç çул тăван килне пырайманскер,
Тав турăн эс хитре сăмахсемпе.
Каллех кĕреп.
Тăхта-ха, ку мĕскер?
Урай шăлан эс çав чечексемпе.

1972

* * *

Йăл кулатăн,
Юрлан, ихĕрен
Эсĕ çавăрнă хăв аллуна
Пысăк — пысăк çĕрте ĕçлекен
Пăнчă пек пĕчĕк чунлă çынна.

Пĕл: ун арăмĕ чирлĕ выртать.
Вăрçăра, çăлнă чух мăшăрне
Юлнă, имĕш, тăхлан кăкăрта,
Халь куçать тет чĕре çывăхне...

1971

* * *

Мана
Хула урамĕнче курсан
Куçу хĕмленчĕ вутăн-çиçĕмĕн.
Кайăк пекех

* * *

Укăлчаран тухса, чупса анам-и
Хумĕпеле вылян Выл хĕррине,
Каçă çине тăрса тăр шыв ăсам-и,
Шывпа пĕрле — хĕвелĕн шевлине?

Ухлĕм урлă утса хуллен каям-и
Çут сывлăм сыпнă улăх варрине,
Хăрах аллăмпала тытса пырам-и
Хĕрлĕ чечек çыххин шĕл-кăварне?

Мăшăр çунат хушса пырса кĕрем-и
Шап-шур чăлхаллă хурăн чăтлăхне,
Шухăшăмсен айне пулса итлем-и
Çул кайăкĕн кĕрнеклĕ кĕввине?

Тухаймăп эп, ытарайми кĕтесĕм,
Хĕлхем пекех хĕрӳ ытамăнтан,
Ялан санпа ман ĕмĕтĕм-чĕкеçĕм,
Инçе-инçе чухне те хам санран.

1971

## ТĔКĔР УМĔНЧЕ

(Шӳт)

Килтисем ĕçе кайсан,
Пӳрт-çуртра кăшт пуçтарсан
Кинеми тĕкĕр çине
Пырса пăхрĕ ирхине.

— Ай пачушки! Вăт инкек —
Кăтартать катемпи пек.
Тĕкĕр, эс йăлтах пăсан,
Сăнăм çакăн пек-и ман?

Пĕрсе лартнă çамкана,
Чалăштарнă сăмсана.
Писев сĕрнĕ пек хитре
Тĕс халь курăнмасть питре...

Пурччĕ манăн куçкĕски,
Тупас çук тек ун пекки.
Вунçичче кайсассăнах
Туянсаттăм эп ăна.

Пăхса ил кăна пĕрре —
Савăнатчĕ чун-чĕре:
Эс чечек, эсех çырла,
Капăрлан, ташла, юрла...

Шел, çав чаплă тĕкĕре
Ватрăм çирĕм çиччĕре.
Унтанпа вара нихçан
Куçкĕски умне тăман.

Пăхрăм — тĕлĕнтĕм паян:
Эс вĕт ман ята яран.
Мăшкăл çеç эс, тĕкĕр мар,
Кантăк уç та вăркăнтар!

...Кăтартмасть тесе хитре
Эх, ят тиврĕ тĕкĕре.
Карчăк маннă-шим вара:
Хăй вăл... сакăрвуннăра.

1970

Пĕвӳ вĕлтлетрĕ сан...
«Сăмах чĕнме
Эпир туссем-и — мĕн?»

Кунçулăн
Таврăнми кукрийĕсем
Чĕлхе çыхланмаллах-ши çылăхлă?
Пĕр-пĕринчен çапла инçелнĕçем
Чуна каллех
Вырнаçрĕ çывăхлăх.

1972

## ĔМĔР САККИ САРЛАКА

Чĕрем мансаччĕ ĕмĕрлĕх сана,
Чипер сăнра телей шыракана.
Каллех шаккатăн манăн алăка,
Каллех шаккатăн манăн алăка,—
Ĕмĕр сакки, тăванăм, сарлака.

Икĕ куçу ĕлĕкхи пек кулмасть...
Памарĕç-им унта пылпа кулач,
Çухатрăн-им самантлăх ырлăха,
Çухатрăн-им самантлăх ырлăха?
Ĕмĕр сакки, тăванăм, сарлака.

Халь сан йăву та, ачусем те çук,
Хăв пепкӳсемшĕн пултăн эс куккук.
Нихçан иртми, тееттĕн яшлăха,
Нихçан иртми, тееттĕн яшлăха...
Ĕмĕр сакки, тăванăм, сарлака.

5. Çĕр çаврăнать.

Çурхи шыв пек юхать кунçул,
Çавăрăнса килмешкĕн çук ун çул.
Каллех шаккатăн манăн алăка,
Калех шаккатăн манăн алăка...
Ĕмĕр сакки, тăванăм, сарлака.

1972



# ÇĔР ÇАВРĂНАТЬ

## СЛАКПУÇ ÇĂЛКУÇĔСЕМ

Слакпуç, Слакпуç,
Выртса эп чуптăватăп
Асамлă та сăваплă айлăма,
Сар кун çĕршывĕнчи пекех туятăп
Кăвак Урал ытамĕнче хама.

Слакпуç, Слакпуç,
Хăюсăррăн иртетĕп
Урамупа эп Кĕçтенттин патне.
— Салам, пиччемĕр!
Пуçăма пĕкетĕп
Йăлттам поэзин çутă çăлтăрне.

Ав, пикесем
Утса килеççĕ хирĕç,
Нарспилĕх пур кашнин пит-куçĕнче,
Вăтаннăран-ши, чарăнчĕ хĕр-юрăç
Сад пахчинчи чул-палăк умĕнче.

Ан чарăн, сарă йăмăкăм, ан чарăн,
Поэт юрра юратнă пĕчĕкрен.
Атя, шăрантарар-и ян-янравлăн,
Сетнерсемпе пĕрле чун-чĕререн...

Укăлчаран
Çав шухă çемĕ юхтăр
Силпин

Ĕшнеллĕ ешĕл улăхне,
Капмар Слакçи
Тăрне çитсе мухтатăр
Патвар Пăрттан
Пăхатирле йăхне.

Ах, çăлкуçсем...
Ах, шăнкăрти акшарлăх,
Ахальтен мар мухтать иккен Ухсай!
Ман ыталас килет
Сире самантлăх,
Выртас килет,
Сире куçран пăхса...

Тăп-тăр шыва
Сыпсассăн сыпкăм-сыпкăм
Хĕлхем выляне
Чунăм тĕпĕнче.
Сăмахăмсем те пиçĕç çупкăм-çупкăм
Слакпуçăн
Сар хĕвелĕ айĕнче.

1972

* * *

Слакпуçĕнче — шап-шурă çĕмĕртлĕх,
Шаровкăра та шурă çĕмĕртлĕх.
Çĕмĕртлĕхри саркайăксем пекех
Ик ял туслашрĕ ĕмĕр — ĕмĕрлĕх.

Слакпуçĕнче пуплеççĕ чăвашла,
Шаровкăра — чăн-чăн украинла.
Украинла та чăвашла çеç мар,
Пуплеççĕ пушкăртла та вырăсла.

Слакпуҫӗнче ӗҫлеҫҫӗ паттӑрсем,
Шаровкӑра тимлеҫҫӗ харсӑрсем.
Кӗркуннепе уяв-вӗрле ҫитсен
Юмарт хӑналанаҫҫӗ тӑвансем.

Чун-чӗрере—«Нарспипеле»
«Кобзарь»,
Вӗсемпе этем хӗрӳ, хастар.
...Ыталанса ҫӳреҫҫӗ уй-хирте
Ивановпа Шевченко юнашар.

1972

* * *

Ӗлӗкрех чӳк тунӑ вырӑн
Пулнӑ имӗш ҫак тӳпем.
Пуҫне уснӑ пилӗк хурӑн,
Хускалмаҫҫӗ кӑтрисем...

Ан вӑтанӑр,
Уҫӑр, уҫӑр
Йӑлтӑркка куҫӑрсене.
Иртнӗ тӗшмӗшлӗх ан хуҫтӑр
Сирӗн кӑмӑлӑрсене.

Турӑшпа тухмасть халь халӑх,
Тӳпене кӳмест парне.
Тӑрӑшса ӗҫлет те лайӑх,
Хӑй курать пархатарне.

Ав, пӑхсамӑр:
Симӗс пурҫӑн
Евӗр тулӑ хумханать.

Ырă куншăн, пурлăх пуршăн
Шăпчăк-кайăк савăнать.

Çук, текех сире ăс памăн,
Каçарсамăр çеç мана.
Вĕрентсе тăмалăх кам эп?
Янкурас хăна кăна.

Хăвăрах аван сисетĕр
Çулленех кĕр мăнтăрне.
...Хурăнсем,
Çапах сирсемĕр
Именӳлĕх чатăрне.

## ПАРАППАНÇĂ

И. Г. Малгая

Астăватăн-и, пиччемĕр,
Янтуша кайнисене,
Çĕршер куçăн вутлă хĕмĕ
Шăтарас пек çуннине?

Галстуксем кăварланатчĕç,
Янăратчĕç юрăсем,
Пĕтĕм шкул стройпа уғатчĕ,
Умĕнче — çыравçăсем.

Хумханса хуллен эс пытăн
Чи малти ача патне,
Аллуна ачашшăн тытрăн
Пионер параппанне.

Пӑнтӑр — пӑнтӑр,
Пӑнтӑр-пӑнтӑр
Сасӑ кайрӗ урамра.
Харӑс утӑр, харӑс утӑр,
Тӗрӗс пус, улшу ура!

Утмӑл ҫулӑнтан пӑрахнӑ
Эс, пиччемӗр, аллӑшне.
Яш чунпа сирсе пыратӑн
Пурнӑҫ хумӗн анлӑшне.

Кӑтака ҫитсе ӳкетӗн,
Отрядна туян хыҫра.
Кулаксем тапӑннине те
Асилен пуль хушӑран.

Тӗлӗнеҫҫӗ,
Ӑмсанаҫҫӗ
Пурте сӑвӑҫ чӗрине.
Вӑл — ҫап-ҫамрӑк, вӑл — асамҫӑ,
Вӑл манмасть хӑй кӗввине.

1972

## ДЖОРДЖ БАЙРОН ДАРДАНЕЛЛ УРЛӐ ИШСЕ КАҪНИ

Сарлака Дарданелл, сарлака,
Чӑрсӑр юхӑмваскать те васкать.

Икӗ тинӗс ал панӑ ҫӗрте
Анӗ ҫич ҫухрӑмран та иртет.

Халапра пĕр Леандр кăна
Ишсе каçнă-мĕн çак вырăна.

Леш енче ăна Геро-пике
Каçсерен кĕтнĕ хăйçутипе.

Пĕринче хăйă ларнă сÿнсе,—
Каччă çĕтнĕ хумсем хушшинче.

—Çавăн пек Дарданелл, манăн сэр,—
Тенĕ çулçÿревçе офицер.

— Ирĕк парăр: ишеп те каçап,—
Тет хăюллăн ăна акăлчан.

Ак вăл сикрĕ шыва. Хыçалтан
Пăхса юлчĕ ăна капитан.

Çил тухать, хум ташлать, ĕрĕхет,—
Харсăр савăç ишет те ишет.

Çĕнтерÿ! Çĕклесе аллине
Тухрĕ вăл леш çыран хĕррине.

— Чыс чури, тĕлĕнтертĕн мана...—
Капитан ыталать Байрона.

1971

* * *

— Ăçта каян?— ыйтаççĕ сăрт-тусем.—
Е хăпаратăн, е чупсах анатăн.
— Хам сăнăма шыратăп, тусăмсем,
Хам сăнăма шыратăп.

— Ăçта каян?— ыйтаççĕ вăрмансем.—
Пĕр çулсăр-мĕнсĕр канăçсăр утатăн.
— Хам йĕрĕме шыратăп, тăвансем,
Хам йĕрĕме шыратăп.

— Ăçта каян?— ыйтаççĕ кайăксем.—
Кашни юрра, кашни çемме тăнлатăн.
— Хам сассăма шыратăп, чунăмсем,
Хам сассăма шыратăп.

1972

## ТĂВАН ЧĔЛХЕМ

Пуйăспала
Канашалла çывхарнăçем,
Пăрахутпа
Шупашкара таврăннăçем,
Атте-анне чĕлхипеле калаçнине
Хавассăн юрăсем шăратнине
Илтсен, мăшăр çунат
хушать чĕрем.

Хăй тăванне
Сума сăвать чăваш,
Сăмахĕсем
Ай-хай сăпайлă та чăваш:
Çав сасăсем лăпкаççĕ хăлхана,
Хумхантараççĕ савăнан чуна,—
Эп çывăха куçса ларап вăш-ваш.

Ирĕк ыйтса-шуса тăмасăрах
Ентешсене сăмах хушап часрах.
— Хăш ял?

— Çав ял.
Пур шӳчӗ те кулли,
Халапланса пырап кăмăл тулли,
Çитӗнӗ тейӗн, пурте пӗр касра.

Куçăм умне
Тухать ял уничи,
Çуралнă килӗн сăрлă чӳречи,
Килхушшинче кăштăртатан аннем,
Ача чухне хам лартнă хурăнсем,
Пике пек капăрланнă улмуççи...

Пуйăспала
Канашалла çывхарнăçем,
Пăрахутпа
Шупашкара таврăннăçем,
Атте-анне чӗлхипеле калаçнине
Илтсен, кил ăшшине туять чӗрем.

1971

## ÇУНАТ

Я видел лебедя крыло.

В. Федоров

Çунат — ялан тӗкел вăл, мăшăр
Анчах эп куртăм пӗр çунат.
Тăвать вăл кăшăр, кăшăр, кăшăр,
Сасси пырса тивет чуна.

Миçе пин çухрăм-ши вӗçтернӗ
Вăл сывлăшра шуракăша,

Кĕр пулнă — кăнтăра çитернĕ,
Çур пулнă — тавăрнă ăшша.

Çĕр халăх куçĕпе ăсаннă
Вăл унталла та кунталла.
Малта чух — кайрине çул панă,
Кайра чух — талпăннă мала.

Çил-тăвăл çĕкленсе алхаснă
Е тăкнă çумăр витререн.
Çунат çиле хăюллăн каснă,
Çунат сыхланă сивĕрен.

Эп кайăк хăватне куратăп,
Куратăп илемне, тĕсне.
Çапах та кам-ши,—ăнланмастăп,—
Икке пайланă йĕтесне?

Хăех, тен, акăш сусăрланнă,
Аманнă, хуçнă çунатне?
Тен, сĕмсĕр тилĕ тăпăлтарнă
Вăл утнăçемĕн шыв патне?

Кам пĕлтĕр, ăнăçсăр сунарçă
Персе антарнă, тен, ăна?
...Халь унпала урай шăлаççĕ,
Сасси пырса тивет чуна.

1971

**(З. Дичаровран)**

Пурнас тени — постра тăрас тени:
Ĕçре, юратура, кĕрешӳре...

Чечек мĕнле сывланине илтни,
Çут çăлтăр уçакан çула — йĕре
Сăна-сăна, чун витĕр кăларни,
Пĕчĕк ĕçрен пысăккине туни,

Палламан çын ыратăвне туйни,
Ăна пĕрле тӳсмешкĕн пултарни.
Ан тăк пĕр кун та ĕмĕр кӳллинчен,
Ан чак пĕр шит те пурнăç постĕнчен.
Шуралĕ хура-шур курса тăнлав,
Чакма, тăванăм, пурпĕр çук сăлтав.
Ватăлнăçем лăпланĕç чĕресем,
Анчах иртнишĕн ӳкĕнмĕç вĕсем.
Эппин, тăрар хурал улшăниччен
Этемлĕхĕн чи аслă постĕнче.

1972

## ТĔРĔСЛЕКЕНĔМЕ

Миçе хутчен,
Миçе хутчен эп лартăм
Çырас тесе
Çак тĕрĕслев ĕçне.
Анчах ăна
Аяккалла шутартăм
Çитереймесĕр
Шухăша вĕçне.

Çавăн пекех эп
Çăмăл çилхăван-и,
Е тавракурăм
Пĕчĕк-и çапла?

Çук, çук,
Сăлтавĕ унта мар, тăванăм,
Урăх çĕрте
Ăна шырамалла.

Çак тетраде
Умма уçса хурсассăн,
Чернил çине
Пуçсассăн ручкăма,
Инстинкт-и, мĕн-и,—
Хам та ăнланмастăп,
Тĕтре карса илет
Ман пуçăма.

Унтан хĕвелленсе
Килет çанталăк,
Çӳретĕп эп
Поэзи пахчинче.
Теми те çĕнĕ,
Рифмисем те лайăх,
Вылять çеç аллăм
Шурă хут çинче

Пĕлместĕп:
Хăçанччен-ши ыткăнатăп,
Эп çилçунатлă
Урхамахăмпа,
Хавхалану иртсессĕн
Тин куратăп:
Çыру ĕçĕ
Паян та çырăнман.

Ăна эп сунтăха хуратăп.
Вырттăр
Черет кĕтсе,
Тепре пушаниччен!

...Поэт хӑйне
Юррисенче кӑтарттӑр,
Дипломӗ пултӑр
Сӑвӑ йӗркинче!

1971

* * *

Ҫӗр ҫаврӑнать,
Ҫӗр ҫаврӑнать...
Хӗвел тухать, хӗвел анать.
— Антӑр, ыран каллех тухать,—
Текен хӑйне-хӑй улталать.

Вӑхӑт арманӗ аврать,
Ҫунаттине вӑр-вӑр сулать,
Пӗрре сулать те — кун пулать,
Тепре сулать те — каҫ пулать.

Пин хут эс виҫ те талӑкна —
Ҫирӗм тӑват сехет кӑна.
Тем пек шансан та вӑй-хална
Туртса тӑсаяс ҫук ӑна.

Ҫамрӑк тесе, ҫырӑп тесе
Ирттертӗм ырӑ ҫулсене.
Урхамаха йӗнерлесе
Халь хӑвалатӑп вӗсене.

Ҫитейӗп-и, ҫитеймӗп-и:
Чупать, чупать сехет йӗппи,
Ватлӑхалла халь ҫул юппи,
Тен, инҫе мар кунҫул тӳпи?

1971

## АВГУСТ КАÇĔ

Вутланан чĕремре —
Чир те хуйхă,
Ан лăплан, чунăм,
Кăмăл, туллаш!
Кирлĕ мар халь мана
Пĕртте ыйхă,
Кирлĕ мар мана
Вырăн тавраш!

Пуçăмра
Шухăшсем вылянаççĕ
Тӳпере
Çăлтăрсем çуннă пек.
Август каçĕ,
Çурла уйăх каçĕ
Канăçа
Эс вĕçтертĕн çилпе.

Тăхăнатăп.
Тухатăп.
Куратăп
Тулăх кĕрĕн
Каçхи илемне.
Кĕмĕл август!
Санра эп куратăп
Сăмахсен
Тухатуллă вăйне.

1971

## САР ВӖРЕНЕ АЙӖНЧЕ

Саралтӑн вӗрене, саралтӑн—
Ҫунатӑн ҫулӑм ташшинче.
Кӑҫал та чи малтан сайралтӑн
Капмар тиреклӗх варринче.

Хӗвел, тен, ытларах юратрӗ
Сан ҫӑлтӑр пек ҫулҫусене,
Чуптунӑҫем кайма васкатрӗ
Чӗр хлорофилл хӗрхӳлӗхне?

Ҫийӳ-пуҫу — сар хӗр ку, тейӗн:
Масмак та кӗмӗл шӳлкеме.
Ҫӑт-ҫат алӑ ҫупсах кӗтетӗн
Мана аллейӑна кӗме.

Кӗретӗп, ҫӑмӑллӑн утатӑп
Эс сарнӑ кӑпӑш паласпа.
Вара шухӑшӑма путатӑп
Шуйханнӑ чӗремпе, ӑспа..

Эс те, поэт, шап-шур ларатӑн
Тантӑшусен эртелӗнче.
Ҫаплах шӳтлен, ташлан, юрлатӑн,—
Ҫук тейӗн ватлӑх ҫӗр ҫинче.

1971

* * *

Шӑранан сар хӗвел питтинче
Юр купи сан куҫу умӗнчех
Ирӗлет

6. Ҫӗр ҫаврӑнать.

Хăвăлланчĕ варри,
Ишĕлсе чăнкăртатрĕ тăрри.

Тумлама ыталарĕ тумлам,
Пĕрлешӳ вăй илет ламран-лам.

Шыв юххи туртăнать çырмана,
Ан пĕвелĕр, ан чарăр ăна.

...Çĕннине çул уçса паракан
Пурнăçра та хисеплĕ ялан.

1972

## ТУТИМĔР

Тутимĕр, ăслă урхамах,
Сана манма пултараймастăп.
Эс лартнă мăкăль те çумрах,
Ăна хамран уйăраймастăп.

Пĕрремĕш хут утланнине
Хальхи пек лайăх астăватăп:
Хам ӳкрĕм лапчăк чул çине,
Çаплах сан хыççăнах чупатăп.

Ай-хай, туслашрăмăр кайран,
Сив шыв сапса та сивĕтеймĕн.
Анчах эп кайрăм. Эс ăнлан:
Шăпи пĕр мар утпа этемĕн.

Кунта пур тепĕр урхамах —
Ылтăн уй-хирĕн çилçуначĕ.

Шухăшăма хăват пама
Çав Пегаса çăварлăхласчĕ.

Вăл малалла вĕçтернĕçем
Çилхи ун хĕлĕх пек юрлатăр,
Хăвăртлăхпа киленнĕçем
Ман шухă чун-чĕре вутлантăр!

1972

## САЛАКАЙĂК

Салакайăк, салакайăк,
Салакайăк чим-чим-чим.
Çепĕç шăпчăк евĕр лайăх
Юрлассу сан килчĕ-им?

Ăнланатăп, ăнланатăп,
Пахчари çерçи, сана.
Эпĕ хам та ăмсанатăп
Янкăс сасăллă çынна.

Шăнкăрчсем шăрантараççĕ,
Киленеççĕ тăрисем...
Санăн халь чăтса тăрас-и—
Яр пĕрре, тĕлĕнтерсем!

Çук çав, çук çав, тăрăшсан та
Танлашаймăн шăпчăкпа.
Мĕскĕн тусăм, тур паман-тăк —
Тин илеймĕпĕр вăйпа.

1972

# ТĔЛПУЛУ

Каласассăн тĕлĕнĕ тĕнче:
Хусанти портра, пĕррехинче
Эпĕ куртăм Çеçпĕл Мишшине,
Вăл çул тытрĕ Шупашкар енне.

Çиййĕнче — тĕрленĕ шур кĕпе,
Куçĕпе çиет хăй, куçĕпе...
Ыталам-и, Çеçпĕл, эп сана,
Чĕререн тухма пĕлмен çынна?

Хусанта эс пулнă пĕрре мар,
Килнĕ халăх ĕçĕ-хĕлĕпе.
Сăмаху сан — хăть те чул кастар,
Вăй-халу — вун çын хăй -халĕ пек.

Çамрăклăх йĕррипеле, тесе
Çаврăнма шутларăн-ши кунтан,
Теччĕ вăхăтне аса илсе
Киленсе çӳрерĕн-ши чунтан?

Çеçпĕл, Çеçпĕл, тăхтасам кăштах,
Пĕлтерем çĕн хыпарсем сана!
Чарăнмарĕ, иртрĕ вăл вăштах,
Чылайран ал сулчĕ пĕр кана...

Эх, калаçаймарăм, пĕреххут,
Хум шуйхатрĕ шухăшăмсене.
«Çеçпĕл» ятлă шурă пăрахут
Шăппăн шурĕ Шупашкар енне.

1971

## ЮРĂ

— Анкарти хыçне вир акрăм,
вир акрăм!
— Эпир ăна таптатпăр,
таптатпăр!
— Эсир мĕнпе таптатăр,
таптатăр!
— Тур лашапа, таптатпăр,
таптатпăр!

Юрлатăп эпĕ çак юрра
Час-час хитре тĕлĕксенче:
Туяп хама вунулттăра
Тăрап пек Шетмĕ хĕрринче.

Çуркуннехи каникула
Ярсан шыв-шурлă кунсенче
Эрнелĕхе манса шкула
Чупаттăмăр çерем çинче.

Кашнийĕн пурччĕ куç хывни,
Тус пулнă манăн та, паллах,—
Вăл калаçни те йăл кулни
Çĕклетчĕ темшĕн кăмăла.

Вăхăт иртет. Яш ĕмĕре
Тур лашапа таптать вăл тек.
Анчах та ватăлмасть чĕре
Яшлăх юрри кивелмен пек.

Çӳретĕп эп тăван ялтан
Пĕр çывăхра, пĕр аякра
Çурхи кунсем çитсен, ялан
Тăнлатăп манăçми хора:
— Анкарти хыçне вир акрăм,

вир акрăм!
— Эпир ăна таптатпăр,
таптатпăр!
— Эсир мĕнпе таптатăр,
таптатăр?
— Тур лашапа таптатпăр,
таптатпăр...

1971

* * *

Калех ыйтатăп: эпĕ кам?
Явап тыттармалла тĕпчетĕп.
Вăраххăн, тимлĕн хама хам
Сехетĕн, кунăн шĕкĕлчетĕп.

Эп пулнă юлташпа хăр-хар,
Эп ват çынна та кӳрентернĕ...
Паллах, чунра усал юн мар,
Çӳренĕ ăнланми тӳнтерлĕх.

Çав килĕшӳсĕр танлăха
Халь çынлăх шайĕпе виçетĕп.
Пĕр вăхăта, малтанлăха,
Сăввăмсемпе хӳтĕленетĕп.

Шур пăс пек шухăш ăшĕнче
Ларап патша пекех мăнаçлăн.
Анчах çак çеç-и çут тĕнче?
Вăл — витĕр тăрă, сывă, аслă.

Кĕçех Некрасов хăй килет.
Калать, пырса тăрса умма:

«Поэт пулайӑн-и, мӗнле,
Анчах эс тивӗç çын пулма!»

Вара вӑл шӑппӑн кайиччен
Хамах судья та эп, ваккат та
Чӗре саккунӗ умӗнче
Пуçа чиксе явап тытатӑп.

1972

## ТИВӖÇ

Хресченлӗх пур ман чӗремре —
Тул çутине ытараймастӑп.
Çав туйӑмран ӗмӗрӗмре
Самантлӑха та уйрӑлмастӑп.

Эп çывӑратӑп шӑпчӑкла.
Çур çӗр иртсессӗн тин выртам-и,—
Çавах пырать те çупӑрлать
Шуçӑм çилхин кӑвак ытамӗ.

Эп астӑватӑп: сухаçсем
Ирпе ирех уя тухатчӗç.
Нӳр сывлӑшпа-ши, учӗсем
Пуçне ухатчӗç, тулхӑратчӗç.

Кун çутине хисеплеме.
Эп ял çыннисенчен вӗреннӗ.
Çӗр сӳреме, кӗтӳ кӗтме
Вӗсем хушнипеле çӳренӗ.

Хумсем çинчи лутка пекех
Сӳре сике-сике пыратчӗ.

Лаши вара юман пĕкке
Юлхавлăн кăнтарса утатчĕ.

Кĕтӳ ачи, эп вăхăта
Мĕлкем тăршшĕпеле виçеттĕм.
Кăнтăрлапа пӳ пĕр утас
Тăрса юлассине пĕлеттĕм.

Трахвин таки, кăвак сухал,
Каскăнĕпе тарăхтаратчĕ.
Йышпа пĕрле çини сахал —
Аяккалла вăл пăрăнатчĕ.

Тарсассăн, вăрăм пушăпа
Ăна эп тивертсе илеттĕм,
Мăйрака тус вара хушка
Пуçне суллатчĕ пит çиллессĕн.

Кĕтӳ кĕртсессĕн, каçхине
Апат çисессĕнех выртаттăм.
Хĕвелĕн хĕрлĕ аллине
Ирпе сиссе куçа уçаттăм.

Эп манас çук тăван яла:
Парни-пĕрни яланлăх юлĕ.
Кăвак çутлах тăрас йăла
Çав хисепре пĕрремĕш пулĕ.

Ентешĕмсен ĕçченлĕхне
Пуçа тайса эп чыс тăватăп.
Иккĕленсе, сăввăмсене
Чи тӳр писмен çине хуратăп.

Кĕтӳçĕ ман кĕнекене
Хăйпе пĕрле уя илинччĕ.
— Сана, тăванăм, ĕненеп,—
Тесе, вуланăçем, калинччĕ.

Сухаç çав сăвă йĕркине
Кăпка кассемпеле шайлатăр.
Сиссессĕн чунăм суйнине
Кĕнекене вута пăрахтăр.

Вăл маншăн çăкăр тунине
Туям эп, пултару этемĕ.
Ахалĕн парăм тенине
Парса татма хевтем çитеймĕ.

Эппин, тăрам-и иртерех,
Çунатлă шухăш вĕçтĕр, кайтăр.
Хам йĕрĕме упран хире
Тăри юрри пек янăраттăр.

1972

## ВАХАТ, ВАСКА!

Çулсем, çулсем,
Ăçта эсир чупатăр,
Кам илĕртсе тăрать
Малта сире?
Çулсем, çулсем,
Тархасшăн ирĕк парăр
Самантлăх
Çаврăнса пăхма
Пире.

...Хĕрлĕ Мускав
Урамĕнче васкавлăн
Утса çӳрет
Çап-çамрăк коммунар.
Ярса пусать

Салтак пек чун-хаваллăн,
Ара, палланӑ çын-çке,—
Чарăнар.

Салам сана,
Салам, Василий Юдин!
Куратпăр:
Халăх ĕçĕшĕн çунан.
Эс ирĕк çын!
Сана илеймĕç сутăн,
Эс çĕнĕ пурнăç
Никĕсне хыван.

Алра — хаçат,
Алра — чăваш хаçачĕ,
Яла каять
Çĕршыв тĕп хулинчен,
Чулкаç та Хусанкай
Хыпар пухаççĕ
Автогигант та
Магнит-тусенче.

«Çĕнĕ йĕрке
Çунат сарса йăл илтĕр,
Кив тымара
Ĕмĕрлĕхех кăклар»...
Йыхрав-сасса
Пĕтĕм тĕнче итлетĕр,—
Калать Васпик—
Ответлă секретарь.

...Ăçтан тухать-ши
Вĕççĕр пархатарлăх,
Ăçтан тухать
Вут-хĕм сапан сăмах?
Утмăлри çын —

Салтак пекех хастарлă,
Пăхатăн та —
Вăл халь те çамрăках.

Çулсем, çулсем,
Мĕнле васканă — васкăр,
Вăхăт вăйне
Пуççапас çук нихçан.
Ĕçĕмĕрпе
Унтан малта пыратпăр,
Апла, эпир
Çунатлăрах унтан.

1971

## ХУСАНКАЯ АСĂНСА

Анчах утса çӳреттĕн мар-и
Шупашкарти тĕп урамра?
Паян ятна, ав, наборларĕ
Хаçат хура тăваткăлра.

Усал хыпар утпа çӳретĕр,
Анчах та ĕненес килмест.
Умрах-çке эс, пиччемĕр Петĕр,
Патвар сассу çеç илтĕнмест.

Çук, çук, чăн сăвăçсем вилмеççĕ,
Тăраççĕ ĕнчĕ пек çиçсе:
Флоренцирен кунтах çитеççĕ
Алигиери хĕмĕсем.

Иванова витеймӗ ватлăх,
Тивеймӗ тутăх Çеçпӗле.
Эс вӗсемпе пӗр тан, пӗр ятлă
Çӗршывшăн тунă ӗçпеле.

1970.

## АЛЬБЕРТ КАНАШ

Маччана пăхса выртатчӗ
Тарăн шухăша путса,
Ывăнсан, тăрса ларатчӗ
Авăс каштаран тытса.

Тупсăмне манса каяссăн
Тытăнать пичетлеме.
Телефон шăнкăртатсассăн
Хыпăнать вăл итлеме.

Сăвăçа асамлă туртăм
Пехилленӗ çут тӗнче.
Çавăн пек ăна эп куртăм
Ӗсмӗлте, хăй килӗнче.

Чунӗпе çулать пуль утă
Лăпкă Энӗш хӗрринче,
Таврăнсан, çурать пуль вутă
Тар шăрçа пек тухиччен...

Тăраймасть — чӗри çеç унăн
Сисӗмлӗ сейсмограф пек
Пурнăçа сăнать.
Вут хунăн
Йăлкăшать, çунать вăл тек.

Машинки шаккать васкавлăн,
Ырă кӗвӗ каласа.
...Хӗртнӗ тимӗре туптанăн
Эп илтетӗп çав сасса.

# ТУПМАЛЛИ

## Çывăх сăнсем


Асамат кĕперĕ . . . . . . . 4
Театрта . . . . . . . . . . —
Антеннăсем . . . . . . . . . 6
Кĕрхи кăмăл . . . . . . . . 8
Управлăх юрри . . . . . . . 10
Юлташ яла кайса килсен . . . . —
Тăван шкула . . . . . . . . 11
Çавал . . . . . . . . . . 13
Çĕрулми . . . . . . . . . 14
Хĕлĕх ала . . . . . . . . 15
Резин атă . . . . . . . . 16
«Çил йынăшать...» . . . . . . 17
«Çуталса килет шуçăм» . . . . . 18
«Çурхи хĕвел çу пек шăраннăçем» . . —
Апрель пуçламăшĕ . . . . . . 19
«Сăрта хĕвел шевли çуллать» . . . . —
«Чăлтăр шурă çăлтăр пек вĕçеççĕ» . . 20
«Сар хĕвел çавра питне сăрларĕ» . . —
Çулçă . . . . . . . . . . 21
Çил çинче . . . . . . . . 22
Çисĕм . . . . . . . . . . —
Пилеш . . . . . . . . . . —
«Икĕ яштак тирек» . . . . . . 23
Атăл чĕлхи . . . . . . . . —
Аннене . . . . . . . . . . 24
Почтальон . . . . . . . . . 25
Хусан-Шупашкар . . . . . . . 25
Çурт тăвакан юрри . . . . . . 26

«Корпуссем, корпуссем...» . . . . . 27
Таркӑн . . . . . . . . . 28
«Апреле ӑмсанать раштав каҫӗ» . . . 29
«Икӗ чӑваш хули хушшинче» . . . . —
«Тӑван кӗтес вӑрттӑнлӑхне» . . . . . —
Ҫумӑр хыҫҫӑн . . . . . . . 30
«Укӑлчаран тухса, чупса анам-и» . . 31
Тӗкӗр умӗнче . . . . . . . —

## Салтак тетрачӗ

Тӑван сӑмах . . . . . . . 34
Салтак чӗри . . . . . . . 36
Амӑшӗ ывӑлӗн палӑкӗпе калаҫни . . . 37
Июнӗн 22-мӗшӗ . . . . . . . 39
Ҫӗршыв пуҫламӑшӗ . . . . . . 40
Тус . . . . . . . . . 42
«Ҫук, вӑрҫӑ мар ку, вӗренӳ кӑна» . . 43
Уйрӑлу сӑмахӗ . . . . . . . —
Кӗркунне . . . . . . . . 45
Уйӑх . . . . . . . . . 46
«Килте, тен, ывӑлне кӗтсе» . . . . . —
Вӗренмелли тревога . . . . . . 47

## Сана ман парнеҫӗм

«Ирсеренех хӗрӳ хӗвел пулса . . . . 50
Хӗл ларать. . . . . . . . . —
«Эс ӗҫрен таврӑннӑҫем . . . . . 51
Никама та ан кала . . . . . . 52
«Кӑнтӑрлапа хуллен ирӗлтеретчӗ...» . . 53
«Килте-ши, килте мар-ши?» . . . . 54
Ҫумӑрпи . . . . . . . . 55
Манӑн ҫӑлтӑр . . . . . . . 56
«Калан савса...» . . . . . . 57
Мӑшӑрлану керменӗ . . . . . . —
«И, хум чупать...» . . . . . . 58
Ан кай, савни . . . . . . . 59
Пӗрремӗш ҫыру . . . . . . . 60
«Сирӗн ялӑр пӗчӗкҫеҫ...» . . . . . —
«Эп иртсе пыраттӑм сирӗн умӑртан...» . 61
Сан куҫусем . . . . . . . 62
«Пӳрнипе чӳрече кантӑкне...» . . . . —
«Ҫурӑлатчӗ мӑкӑнь чӗремре...» . . . 63
Парне . . . . . . . . . —

«Салтак тӳми, ем-ешӗл шӑнкӑрав...» . . . —
«Йӑл кулатӑн, юрлан, ихӗрен...» . . . . 64
«Мана хула урамӗнче курсан» . . . . —
Ӗмӗр сакки сарлака . . . . . . . 65

## Ҫӗр ҫаврӑнать

Слакпуҫ ҫӑлкуҫӗсем . . . . . . 68
«Слакпуҫӗнче — шап-шурӑ ҫӗмӗртлӗх» . 69
«Ӗлӗкрех чӳк тунӑ вырӑн» . . . . . 70
Параппанҫӑ . . . . . . . . 71
Джордж Байрон Дарданелл урлӑ ишсе каҫни . . . . . . . . . . 72
«— Ӑҫта каян?— ыйгаҫҫӗ сӑрт-тусем» . . 73
Тӑван чӗлхем . . . . . . . . 74
Ҫунат . . . . . . . . . . . 75
«Пурнас тени — пострa тӑрас тени...» . . 76
Тӗрӗслекенӗме . . . . . . . . 77
«Ҫӗр ҫаврӑнать...» . . . . . . . 79
Август каҫӗ . . . . . . . . . 80
Сар вӗрене айӗнче . . . . . . . 81
«Шӑранан сар хӗвел питтинче» . . . . —
Тутимӗр . . . . . . . . . . 82
Салакайӑк . . . . . . . . . . 83
Тӗлпулу . . . . . . . . . . 84
Юрӑ . . . . . . . . . . . . 85
«Каллех ыйтатӑп: эпӗ кам?» . . . . . 86
Тивӗҫ . . . . . . . . . . . 87
Вӑхӑт, васка! . . . . . . . . . 89
Хусанкая асӑнса . . . . . . . . 91
Альберт Канаш . . . . . . . 92

**Юрий Семенович Семенов**

# ОРБИТА

**Стихи**

На чувашском языке

Редактор **А. Н. Андреев**
Художник **П. В. Сизов**
Художественный редактор **А. А. Афиногенов**
Технический редактор **В. М. Михайлов**
Корректор **Н. Н. Маслова**

НТ 14949. Сдано в набор 16.V.1973 г. Подписано к печати 28/IX-1973 г. Изд. № 62/74 г. Формат 70×90 1/32. Бумага типографская № 2. Физ. печ. л. 3,0. Усл. печ. л. 3,51. Учетно-изд. л. 3,39. Заказ № 2890. Тираж 1 500 экз. Цена 38 коп.

Чувашское книжное издательство
Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

2150

Цена 38 коп.